# ХĔРСЕМ ПАРАЗИТСЕМ—И?

**Эпĕ Москакасси шкулĕнче А. çырнă «Хĕрсем — паразитсем» статьян тĕп шухăшĕпе килĕшсех каймастăп.**



Мĕншĕн эпир, хĕрсем, «паразитсем»? Мĕнпе килĕштермерĕмĕр эпир сире? Тепĕр енчен каласан, эпир сирĕнпе, «каччăсемпе» танлаштарсан, пĕрре те кая мар. Пурте мар пулсан та, анчах теприсем юратма та, тав тума та, ĕçе шута хума та пĕлеççĕ. Каччăсем хăйсем хĕрсен юратăвне курма пĕлмеççĕ. Сахал мар хĕрсем вĕсемшĕн куççуль тăкать, асапланать.

Ман шутпа, каччăсем «иккĕмĕш паразитсем». Вĕсем яланах хитре кĕлеткеллĕ тата илемлĕ сăнпитлĕ хĕрсем хыççăн «кĕтӳпех чупаççĕ». Илемлĕ те таса чунлисем патне вара никам та пымасть, вĕсене пушшех курмаççĕ, асăрхамаççĕ.

> Юратура укçа-тенкĕн вырăнĕ пулмалла мар. Анчах та хăш-пĕр хĕрсем ăна ăнланмаççĕ.

Статьяри «...хальхи пикесем урок вĕренес вырăнне модный журналсемпе каталогсем уçкаласа, каччăсене мĕнле çавăрмаллине «ăса вĕренсе лараççĕ» шухăш мана килĕшсех каймасть. Сирĕн шутпа, пĕтĕм хĕрсем çавнашкал-и? Çук. Пачах та апла мар. Паллах, хĕрсен пуринчен те хитре пулас килет. Çапах та эпир пурнăçра илемлĕхе пĕрремĕш вырăна лартмастпăр.

Унсăр пуçне статьяра тепĕр шухăш пур: «Эпир кашни кун ашшĕ-амăшне пулăшакансем, килтен панă укçана çирĕпрех тытакансем тата сăмахпа выляма юратманнисем — вĕсене интереслĕ мар!» Мĕншĕн А. çапла шутлать? Ман шутпа, хĕрсем ĕçчен каччăсене килĕштереççĕ. Мĕншĕн тесен каччăсене ĕç илемлетет, паттăрлăхне кăтартать.

Юратура укçа-тенкĕн вырăнĕ пулмалла мар. Анчах та хăш-пĕр хĕрсем ăна ăнланмаççĕ. Ку шухăшпа вара эпĕ авторпа килĕшетĕп. Хĕрсем укçа-тенкĕллĕ каччăсем çумне çыпăçни ман чуна та ыраттарать. Çапах та пур хĕр те апла мар: чылайăшĕ телее юратура шыраççĕ.

**А., Калайкасси шкулĕ**

# ПИРĔН ТАРĂХĂВĂН ЧИККИ ÇУК

**«Хĕрсем-паразитсем» тенĕ шухăшпа эпир килĕшместпĕр. Каччăсем! Мĕнле эсир хĕрсене çапла калама пултарайратăр?**



Çĕр çинче эпир пулмасан, эсир мĕнле пурăнайратăр? Эпир çакна нимĕнле те ăнланаймастпăр. Арăмсем сире валли апат–çимĕç хатĕрлесе параççĕ, килçурт тирпейлеççĕ.

«Лараççĕ вара хальхи 9-10 класс пикисем урок вĕренес вырăнне модный журналсемпе каталогсене уçкаласа, каччăсене мĕнле çавăрмаллине шутласа», — тесе çырнă 5-мĕш номерте Москакасси шкулĕнчен А. Эпир çак шухăша ăнланаймастпăр.

Мĕн пĕлетĕн эсĕ хĕрсем çинчен? Хăш-пĕр хĕрсем ĕçеççĕ, туртаççĕ пулсан та вĕсен çумĕнче лайăххи те пур.

Эсир, каччăсем, хĕрсенчен пĕрре те уйрăлса тăмастăр. Сирĕн, хĕрĕн купарчипе кăкăрĕ çине пăхмали анчах юлчĕ! Эсир хăвăр лапра кĕпесене те çума пĕлместĕр! А., сана валли анне те «паразит»!

Тӳрех курăнать, А. сас палли айĕнче пытаннă каччăн юратнă хĕр çук, е пур, анчах вăл ăна юратмасть, е ăна савни пăрахнă. Эсĕ юлашки йĕркесенче çырнă: «... эпĕ пĕчченлĕхе суйлатăп!» Пулма пултараймасть! Чăннипе каласан, эсĕ пĕтĕмĕшле тĕрĕс шухăшлатăн, анчах сан çитменлĕхсем те май таран. Шухăшласа пăх, хĕрсене çемçе шурă кушак çурипе танлаштарма пулать.

Эсĕ çыратăн: «Хирĕç пĕр сăмах чĕнсе пăхăр–ха вĕсене! Хăвăн çинчен усал сăмахсемпе мĕн–мĕн çĕнни пĕлместĕн!» Лайăх çырнă, анчах ун пек пикесене пĕр сăмахпа чĕнеççĕ. Пĕр чипер хĕрпе туслаш, вара чун савнинче мĕн нумайтарах пулнине ăнланăн — лайăххи е япăххи.

# ХĔРСЕМ ПАРАЗИТСЕМ МАР

**Пирĕн шкулта «Хыçалти парта» хаçатăн кашни номерне ачасем вулаççĕ. Юлашки номере уçсан тӳрех куçа «Хĕрсем паразитсем» текен статья куçа тăрăнчĕ. Эпир 8-мĕш класс ачисем вăл статьяна тимлесех вуларăмăр. Пире вăл питĕ килĕшмерĕ.**

Мĕншĕн-ха Москакасси шкулĕнчи А. апла çырать? Вăл хăйĕн ĕмĕрĕнче лайăх хĕр курман-и? Хĕр ачасем те арçын ачасем пекех лайăххисем те, япăххисем те пулаççĕ. Хĕр ачапа мĕнле калаçнинчен питĕ нумай килет. Вырăссем каланă пек «каков привет, таков ответ».

Хĕр ачасене яланах хĕр пек пулма вĕрентеççĕ. Арçын ачасен вара çирĕп пулмалла. Сире никам та айăпсăр пулсан хăвăн çине ил темест. Сирĕн шутпа, хĕр ачасенчен кулма юрать, вĕсене ним вырăнне те хумалла мар. Хĕрсен вара сире нимĕн те каламалла мар. Çук! Хĕр ачасем пĕрпĕрне пулăшни, хӳтĕлени питĕ лайăх! Ун пек хĕрсем хальхи вăхăтра сахал. Арçын ачасен журналсем пăхма юрать, хĕрсен вара пăхма юрамасть-и? Хĕрĕн турă панă хитрелĕхе упрамалла е хăйĕн ăна тумалла? Унсăрăн епле пурăнăн? Арçын ачасем хĕрĕн сăн-сăпатне кăна пăхаççĕ. Анчах та кăмăл-туйăмĕ вара иккĕмĕш вырăнта.

Москакасси шкулĕнче вĕренекен А. каччăна тавралла тимлесе пăхма хушатăп. Тен, эс, хăвăн шухăшсене улăштарăн?

**Настя ИВАНОВА,**
**8-мĕш класс,**
**Очăкасси шкулĕ**

# ЭПĔ ĂНЛАНАЙМАСТĂП



**«Хыçалти парта» хаçатри «Хĕрсем — паразитсем» ятлă статья мана питĕ пăшăрхантарчĕ.**

Çавăнпа эпĕ те хамăн шухăшпа çырса пĕлтерес терĕм. Статья авторĕ хальхи хĕрсене хурласа çырнă. Манăн çакăнпа килĕшес килмест. Мĕншĕн тесен тĕрлĕрен каччăсем, хĕрсем пулаççĕ. Каччăсен хушшинче эрех ĕçекен те, пирус туртакан та, шкулта япăх вĕренекенсем те, усал сăмахсемпе вăрçакансем те нумай.

Пирĕн шкулта вара сăпайлă, ырă кăмăллă, тăнлă, тирпейлĕ тăхăнакан хĕрсем сахал мар. Вĕсем каччăсен укçа-тенкине мар, кăмăлне, ăстăнне хаклама пĕлеççĕ. Çакна пирĕн шкулта ирттернĕ ыйтăм та кăтартса парать. Çак ыйтăм тăрăх 50 хĕртен 48-шĕ каччăсенче чи малтан кăмăл-сăпатне пăхаççĕ.

Ман шутпа, статья авторĕ чăн-чăн хĕрсене тĕл пулман. Тен, çакăншăн вăл хăй те айăплă? Çакăн çинчен шухăшласа пăхма сĕнес килет ăна.

**Ольга,**
**Калайкасси шкулĕ.**